cc BY


***Петрова Галина Вадимовна***

учитель

МБОУ «Перво-Чурашевская СОШ»

с. Первое Чурашево, Чувашская Республика

# ЗООНИМЫ ПЕРВОЧУРАШЕВСКОГО СЕЛЬСКОГО ПОСЕЛЕНИЯ МАРИИНСКО-ПОСАДСКОГО РАЙОНА

***Аннотация**: статья представляет данные лексико-семантического анализа чувашских зоонимов, используемых для наименования домашних животных Первочурашевского сельского поселения Мариинско-Посадского района Чувашской Республики. В данной статье уделяется внимание описанию лексико-семантических принципов образования чувашских зоонимов.*

***Ключевые слова**: зоонимия, номинация, чувашский язык, собственные имена существительные, антропонимы.*

***Аннотаци**: статьяра Сĕнтĕрвăрри районĕн Урхас Кушкă тăрăхĕнчи зоонимсене тишкернĕ. Вĕсене пĕлтерĕш, пулăвĕ, несĕлĕ, усă кураслăх енчен ушкăнланă. Зоонимсен пĕлтерĕшĕпе вырăнне уçса панă.*

***Тĕп сăмахсем:** зоонимсем, номинаци, чăваш чĕлхи, пайăр ятсем, антропонимсем.*

*Выльăха хĕрхенекен – ырă çын.*

Ваттисен сăмахĕ

Тăван чăваш чĕлхи çав тери пуян, сăмахсен шучĕ пысăк, çавăнпа та хальхи вăхăтра ăсчахсем чĕлхери сăмахсене тематика ушкăнĕсене уйăрса тĕпчеççĕ. Кун пек тĕпчени лексемăсен уйрăмлăхĕсене туллинрех палăртма май парать.

Чăваш халăхĕ авалтанах çĕр ĕçĕпе пурăннă, выльăх-чĕрлĕх усраса пурăннă, сунара çӳренĕ, йытă-кушакпа туслă пурăннă, çавăнпа та пирĕн чĕлхене выльăх-чĕрлĕх, чĕр чунсен ячĕсем кĕнĕ. Малтанах вĕсене ятпа чĕнмен: выльăха, килте пурăнакан чĕр чуна чĕнмелли сăмахсем пулнă. Кашни çыннăн ят пур, çавăн пекех вăхăт иртнĕçемĕн килти выльăха та хуçисем ят пама тытăннă.


Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Юлашки ҫулсенче чӑваш чӗлхин наука пайне зооним термин кӗчӗ. Зоонимсем тесе выльӑх-чӗрлӗх ячӗсене калаҫҫӗ. Пайӑр ятсем хушшинче чӗр чунсен ячӗсем хайне уйрӑм ушкӑна уйрӑлаҫҫӗ, чӗлхе наукинче вӗсене тӗпчесе вӗренекен уйрӑм ӑслӑлӑха зоонимика теҫҫӗ. «Зооним» терминпа икӗ пӗлтерӗшпе усӑ кураҫҫӗ. А.В. Суперанская ӑсчах вӗрентнӗ тӑрӑх, зоонимсем чи малтан чӗр чунсемпе кайӑк-кӗшӗксен пайӑр мар ячӗсем, иккӗмӗшӗнчен, зоонимсем килти чӗрчунсемпе кайӑк-кӗшӗксен ячӗсене пӗлтерекен япала ячӗнчи пайӑр ятсем пулаҫҫӗ.

Тӑван чӗлхери зоонимсем вӑхӑт иртнӗҫемӗн манӑҫа тухаҫҫӗ. Урхас Кушкӑ тӑрӑхӗнчи зоонимсене халиччен пуҫтарса тишкермен, вӗсем калаҫу чӗлхинче майӗпен ҫухалса пыраҫҫӗ. Юлашки ҫулсенче вырӑс тата ют чӗлхесен витӗмӗпе выльӑх-чӗрлӗх ячӗсене те вырӑсла е ют чӗлхепе пама пуҫларӗҫ, ҫавӑнпа та ӗлӗк каланӑ чӑваш ячӗсем ҫухалас хӑрушлӑх пур, пирӗн май килнӗ таран зоонимсене васкарах ҫырса илме тӑрӑшмалла.

Вӗренекенсем проект ӗҫне хавхалансах хутшӑнчӗҫ, Урхас Кушкӑ тӑрӑхӗнчи зоонимсене пухнӑ чухне ялти ватӑсемпе тӗл пулса калаҫрӗҫ, зоотехникра, ветеринарта ӗҫленӗ ҫынсене те кӑсӑклӑ ӗҫе явӑҫтарчӗҫ. Тӗпчев ӗҫӗн практика пӗлтерӗшӗ пысӑк, мӗншӗн тесессӗн пухнӑ материал малашне чӑваш зоонимикине тӗпченӗ ӗҫре усӑллӑ пулма пултарасса шанатпӑр.

Тишкерӳре эпир тӗпчевҫӗсен ӗҫӗсемпе паллашрӑмар [1; 3], чӑваш ҫыравҫисем хайлавӗсенче зоонимсемпе мӗнле усӑ курнине шырарӑмӑр. Ҫыравҫӑсем хайлавсенче чӗр чунсен сӑнарӗсене (йытта, кушака) юратса сӑнланине куртӑмӑр. Тӗрлӗ чӗр чун пурнӑҫӗ, ӗҫӗ-хӗлӗ ҫинчен ҫыравҫӑсем сӑнарлӑ чӗлхепе ҫырса параҫҫӗ. Вӗсен хайлавӗсене вуланӑ май этемпе тӑван тавралӑх, чӗр чунсем хушшинчи ҫыхӑнӑва куратпӑр. Паллах, пире ытларах ҫыравҫӑсем чӗр чунсене мӗнле ят пани кӑсӑклантарчӗ. Вӗсем хайлавӗсенче чӗр чунсен ячӗсемпе пӗлсе, вырӑнлӑ усӑ кураҫҫӗ, выльӑх-чӗрлӗхе, чӗр чунсене чӑвашла ят парса тӑван чӗлхен пуянлӑхне ҫирӗплетеҫҫӗ. Чӑваш ҫыравҫисен 50 хайлавне пӑхса тухнӑ хыҫҫӑн чи анлӑ усӑ куракан ятсемпе ҫакӑн пек таблица турӑмӑр.


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

1-мӗш таблица

| Кушак ячӗсем | Ҫыравҫӑ ячӗпе хушамачӗ | Хайлав ячӗ |
|---|---|---|
| Машка | Ф. Павлов | Манӑн ачалӑх |
| Кӑс-кӑс | Ф. Павлов | Йытӑпа кушак |
| Марук | Г. Луч | Кайӑк тусӗсем |
| Мӑр-мӑр | Ю. Сементер | Кушак ҫурипе шӑшисем |
| Аттус | Е. Лисина | Мускав кушакӗсене чапа кӑлартӑм |

2-мӗш таблица

| Йытӑ ячӗсем | Ҫыравҫӑ ячӗпе хушамачӗ | Хайлав ячӗ |
|---|---|---|
| Жучка | Б. Чиндыков | Аҫу |
| Кампур | М. Трубина | Кампур |
| Малька, Пират | Л. Мартьянова | Малька |
| Хураҫка | Х. Уяр | Куҫук |
| Хураҫка | В. Тарават | Аякри сасӑ |
| Хураҫка | С. Павлов | Ача вӑййи мар. |
| Самолет | Ӑсан Уҫӑпӗ | Кучченеҫ ҫӗклекен йытӑ |

Урхас Кушкӑ ялӗ Сӗнтӗрвӑрри районне кӗрет. Урхас Кушкӑ ял тӑрӑхӗнче 1060 хуҫалӑх, вӗсенче мӑйракаллӑ шултра выльӑх 417 пуҫ шутланать, лаша – 5, сурӑх шучӗ – 797. Паллах, йытӑ-кушака шута илмен.

Ку статьяра Урхас Кушкӑ тӑрӑхӗнчи килти выльӑх-чӗрлӗхпе чӗр чунсен ячӗсене пухнӑ хыççӑн çакна палӑртмалла: зоонимсенче эпир тӑван халӑхӑн иртнӗ пурнӑçне, йӑли-йӗркине, тӑван халӑх культурине те курма пултаратпӑр, халӑхӑн ӑс-пурлӑхне туятпӑр.

Урхас Кушкӑ тӑрахӗнче чи нумай тата чи сахал тӗл пулакан зоонимсене палӑртрӑмӑр.

| Выльӑх тӗсӗ | Чи нумай тӗл пулакан ят | Чи сахал тӗл пулакан ят |
|---|---|---|
| ӗне | Дочка, Тунька, Маруç | Ака, Пӑши, Палан |
| вӑкӑр | Мишок, Мишук, Михалч | Мурат, Ирис |
| лаша | | Асамат |
| сурӑх | Машка, | Таруç, Палюк |
| качака | Маня, Катя | Снежок, Белка |
| килти чӗр чунсем | | |


Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

| | | |
|---|---|---|
| йытă | Бобик, Шарик, Хураçка | Мăнтăркка, Çăмламас |
| кушак | Ваççă, Ваçук, Киçук, | Шур çăмха, Каламас, Шустрик |

Чĕр чунсен ячĕсене мĕне кура панине кил хуçисенчен ыйтăм тунă тăрăх çакна палăртрăмăр:

| | йытă | кушак |
|---|---|---|
| – Мĕнле вăрлăх пулнине, мĕне аса илтернине шута илни – | 33% | 13% |
| – Чĕр чун хăйне мĕнле тытнине шута илни | 22% | 35% |
| – Хуçине чĕр чун ячĕ янравлă пулни, хăйне ытларах мĕн килĕшнине шута хурса пани | 48% | 50% |
| – Тăван чĕлхери сăмахсем килĕшнипе | 3% | 5% |

Урхас Кушкă тăрăхĕнчи зоонимсене пухса тишкернĕ май пурĕ 289  яхăн килти выльăх-чĕрлĕх, килти чĕр чунсен ячĕсене пăхса çакăн пек пĕтĕмлетӳ тума пулать.

Çĕнĕ XXI ĕмĕр чăваш халăх пурнăçĕнче пысăк улшăнусемпе çĕнĕлĕхсем илсе килнипе палăрса тăрать. Пĕр енчен пăхсан, пурнăça çĕнĕ технологисем кĕни, вăл хăвăрт улăштарса пыни пире савăнтарать, анчах та тарăнрах шухăшласа илсен, ку пире, тăван чăваш чĕлхине вĕрентекенсене, пăшăрхантарать. Эпир пухнă зоонимсем, пĕтĕмĕшле илес пулсан, вырăс тата ют чĕлхе урлă кĕнĕ ятсем: тĕп чăваш ячĕсем сайра тĕл пулаççĕ, çавăнпа та Ака, Пăши, Пăрчăкан, Чĕкеç, Маттуркка, Çăмха, Шур çамка йышши ятсем чĕлхере упранса юлни пире савăнтарчĕ.

Чăваш чĕлхи пирĕн халăх историйĕпе тачă çыхăнура тăрать, вăл халăхăн пурнăçĕпе культурине, шухăшлавне çутатса парать. Чĕр чунсен ячĕсен пĕлтерĕшне тишкернĕ чух халăх унăн ăшне мĕнле тупсăм пытарнине, еплерех шухăш-кăмăла, тĕнчекурăма вырнаçтарнине курма тăрăшрăмăр.


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

1. Çын ячĕнчен пулнă зоонимсем пайăр ят çумне *(-ук)* аффикс хушăннипе пулнă ятсем: *Васук, Машук, Мишук., Тасук*.

2. Кинофильмсенчи сăнарсен ячĕсене кура панисем: *Пират, Мейсон, Круз, Матроскин*.

3. Тĕсне кура панисем: *Хурашка, Шур çамка, Улайкка*.

4. Килти выльăх-чĕрлĕх, чĕр чунсен паллине кура панисем: *Мăнтăркка, Çăмха*.

5. Хăçан çуралнине кура панисем: *Ака, Майя, Марта*.

6. Çут çанталăкри пулăмсене кура панисем: *Çăлтăр, Çиçĕм*.

7. Кайăксен ячĕсенче пулнисем: *Чĕкеç, Тăрнашка, Пăрчăкан*.

8. Чĕр чунсен ячĕсем: *Пăши, Пăлан*.

9. Историри паллă çынсен ячĕсем: *Чубайс, Лайма, Напалеон*.

10. Ӳсен-тăрансен ячĕсем: *Малина, Роза*.

11. Çемьешĕн чи хаклă выльăх пулнине кура: *Дочка, Доченька, Малютка, Малыш, Мальчик*.

Чĕр чунсен ячĕсенчен эпир тăван халăх выльăх-чĕрлĕхе, чĕр чунсене юратнине куртăмăр (Маттуркка, Пăрчăкан, Хураçка). Вĕсен ячĕсене тĕсне, хăçан çуралнине, паллине, çемьешĕн хаклă чун пулнине кура панине çирĕплетме пулать, çавăн пекех тĕрлĕ ӳсен-тăран, чĕр чун, кайăк-кĕшĕк ячĕсене те парать.

Пирĕн тăрăхра выльăх-чĕрлĕх ячĕсене ытларах вырăс чĕлхи урлă кĕнисене параççĕ. Кунсăр пуçне чăваш чĕлхинче тĕрĕк е ют чĕлхе урлă кĕнĕ зоонимсем те тĕл пулаççĕ. Ытларахăшĕ паллă ятсем çумне -*ка (-ке), (-ук)* аффикссем хушăннипе япала ячĕсем пулаççĕ, пайăр мар ятран пулса пайăр ята куçнисем те пур. Хăш чухне чĕр чунсен ячĕсем евĕрлев сăвахĕсенчен пулаççĕ *(Мăрмăр, Пĕçук)*. Хăш-пĕр зоонимсем (кушак ячĕсем) хистев междометийĕнчен (*Киçук, Пĕçук*) пулнине асăрхарăмăр. Шел те, юлашки çулсенче тĕп чăваш чĕлхинчен пулнă зоонимсем сахалланса пыраççĕ: килти чĕр чунсене чăвашсем вырăс чĕлхи витĕмĕпе мультфильмри, кинофильмри юратнă сăнарсемпе артистсен, паллă çынсен ячĕсене параççĕ.



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Зоонимсенче чăваш халăхĕн иртнĕ тата хальхи пурнăçĕ, йăли-йĕрки, шухăш-кăмăлĕ, тăван халăх культури курăнать. Выльăх-чĕрлĕх е килти чĕр чунсен ячĕсене панă чухне кил хуçи ытларах хăйне кăмăла каякан ятсене пама тăрăшать, зоонимсем урăх чĕлхерен кĕни ăна вара пăшăрхантармасть.

***Список литературы***


1. Егорова А.С. Чăваш чĕлхине лингвокультурологи çине таянса вĕрентесси / А.С. Егорова // Проектирование механизмов реализации образовательных инициатив: материалы I Всерос. науч.-метод. конф. (Чебоксары, 22 августа 2017 г.) / редкол.: Ж.В. Мурзина, Г.В. Николаева, С.П. Руссков. – Чебоксары: ООО «Издательский дом «Среда», 2017. – С. 72–74.

2. Иванова А.М. Словообразование в чувашском языке – III / А.М. Иванова, Г.Н. Семенова // Вестник Чувашского университета. – 2014. – №3.

3. Исаев Ю.Н. Анимвалистическая когниция. Метафора и сравнение. / Ю.Н. Исаев, Н.В. Николаева, В.И. Сергеев. – Чебоксары, 2016. – 259 с.

4. Корнилов Г.Е. К этимологии некоторых чувашских зоонимов // Ученые записки НИИ при СМ ЧАССР. – Чебоксары, 1969. – Вып. 46.

5. Сафина Э.И. Лексико-семантические образования зоонимов в татарском языке [Электронный ресурс]. – Режим доступа: https://doi.org/10.30853/filnauki.2018-9-1.36

6. Суперанская А.В. Теория и методика ономастических исследований. – М.: Наука, 1986.



Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)